


Паян, чӳк уйӑхӗн вун тӑххӑрмӗшӗнче Чӑваш патшалӑх университетӗнче «Ашмарин вулавӗсем - 8» пӗтӗм тӗнчери ӑслӑлӑхпа практика конференцийӗ иртрӗ. Çак конференцие И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗ уçӑлнӑранпа 45 çул çитнине, кандидат тата тухтӑр диссертацийӗсене хӳтелекен канаш уçӑлнӑранпа 20 çул çитнине халалланӑ. Кунӗпех пычӗ конференци. Ирхине чӑваш филологийӗпе культура факультечӗн студенчӗсем хаклӑ хӑнасене кӗтсе илсе тӗлпулу залне илсе кайрӗç. Уява Иванов Иван Иванович доцент Çеçпӗл Мишшин «Катаран каç килсен» сӑвввипе пуçларӗ. Ун хыççӑн «Эпир пулнӑ, пур, пулатпӑр» сӑвва студентсем питӗ хӗрӳллӗ те çӗкленӳллӗ кӑмӑлпа каларӗç. Малалла чӑваш филологийӗпе культура факультечӗн деканне В.Г. Родионов профессора сӑмах пачӗç. Паянхи уява ӑсчахсем çӗр-шывӑн пур кӗтесӗсенчен килсе çитрӗç: Тутарстанран, Марирен, Удмуртран, Казахстанран. Хӑнасем факультетпа университета салам сӑмахӗсем каларӗç, пӗлтерӗшлӗ парнесемпе чысларӗç. Кандидат тата тухтӑр диссертацине хӳтелекен канаш, университет тата чӑваш филилоги факультечӗ чӑваш республикишӗн, чӑваш халӑхӗшӗн мӗнле пысӑк витӗм кӳни пирки университетӑн наука енӗпе ӗçлекен проректорӗ В.А. Афанасьев, чӑваш филологийӗпе культура факультечӗн деканӗ В.Г. Родионов, Чӑваш патшалӑх гуманитари наукисен институчӗн директорӗ Ю.Н. Исаев., Г.Е. Корниловпа Г.И. Фёдоров профессорсем тата филологи наукисен кандидачӗ,  А.М. Иванова доцент каласа кӑтартрӗç. Уяв «Чӑваш сӑвви» литературӑпа поэтика композициӗпе малалла тӑсӑлчӗ. Кунта республикӑн тӗрлӗ районӗсенчен килнӗ шкул ачисем питӗ илемлӗ сӑвӑсем вуларӗç. Студентсем те хыçра юлмарӗç, хӑйсен çирӗп сассисемпе сӑвӑсем янратрӗç. Наука ӑсчахӗсем, студентсем, вӗренекенсем конференции ӗçне уйрӑм секцисенче тӑсрӗç, хӑйсен çӗнӗ ӗçӗсемпе паллаштарчӗç.